# КАПКĂН

2-ш №




Çĕнĕ претçетаттĕл киввин мăскарине тасатаť.

# Касмантуртапуҫӗнҗе.

(Советсен суйлавӗ хыҫҫӑн).

Касмантуртапуҫ йалӗн советне ҫӗнӗрен суйларӗҫ. Пит лайӑх ҫынсем суйланҗӗҫ.

Ҫӗнӗ совет ӗҫleme тытӑнҗӗ. Инструксисем, җиркуҗарсем, полошенисем, распорешенисем, анкеттӑсем мӗнле кӑтартаҫҫӗ, ҫапла ӗҫлет ҫӗнӗ совет.

* * *

Ҫекреттарпа ҫекси пуҫлӑхӗсем кӗнҗелере 8 сехетрех пуҫтарӑнҗӗҫ. Пур те пӗр вӑхӑтра килҗӗҫ. Ҫтена ҫумӗнҗе вӗҫкӗнленсе шаккакан сехет 9 кӑнлаттарҗӗ, претҫетаттӗл те алӑка уҫса йаҗӗ,—хӑй вӑхӑтнех ҫитрӗ.

— Ну, ӗҫсем мӗнле пыраҫҫӗха, йулташсем?

— Аван пыраҫҫӗха, Сахар Макарҗӑ.

— Йураӗ, йураӗ. Халӑх хушса хӑварнине пурнӑҫа кӗртес...

Лаптак Мӗтри йалсоветне кашни кун ҫӳрекен хӑна. Килти ӗҫӗнҗен пушанаӗ те, тапак туртkалама, ҫавар выҗатма совета кайаӗ. Кивӗ претҫетаттӗлӗн Лаптак пиркийех ҫур ӗҫӗ ӗҫленмесӗр йулҗӗ. Килет те вӑл совета, йумаха шӑратса ҫеҫ лараӗ. Претҫетаттӗлсем кунӗпе ахӑлтатса лараҫҫӗ. Ахӑлтатсан ахӑлтатсан, каҫ та пулса кайаӗ, ӗҫ те йулаӗ.

— Сахар Макарҗ, сывиха, сторови? Ҫӗнӗ совета ҫӗнӗ халап илсе килтӗмха. Леш, кивви пирӗн...

— Мӗтри, терӗ Сахар, — ӗҫӳ ҫук пулсан пире ан кансӗрлеха.

— Мӗнле? Мана совета килсе халап йама штата хунӑ вӗт?

— Ан калаҫ. Ак, каҫ пулсан, пушансан...

— Вот ҫӗнӗ саккун! Йураӗ еппин, кансӗрлемӗп.

Лаптак Мӗтри кунӗпе җӗнмесӗр пӑхса ларҗӗ. Калаҫас килнипе пыр шӑтӑкӗ кӑтӑкланаӗ. Анҗах, йурамасӗ калаҫма. Ҫӗнӗ советра мӗнле ӗҫленине кӑна пӑхса лараӗ.

Совета Шакла Иакку хашӑлтатса кӗҗӗ.

— Ме, Иакку, тыт, — терӗ претҫетаттӗл Иакку кӗнӗ кӗменех.

— Мана мӗн кирлине ӑҫтан пӗлнӗ есир, Сах...

— Планпа ӗҫлетпӗр, планпа. Пирӗн җленсем йалта ыран мӗн кирлине пайанах палӑртса, ырана ваҗҗи хатӗрлесе хураҫҫӗ. Айта, җуп!

— Инке, есӗ аҗу йатне хуртармаим?

— Ҫавӑнпаҗҗӗ те.

— Ме, тыт. А́на епӗр ӗнерех ҫырса хунӑ. Сакӑс ҫексин комиҫҫийӗ ӗҫлет пирӗн ку тӗлӗшпе. Аҗу Олтотийӗ йатлӑ пулаӗ. Ан ман,—Олтотийӗ йатлӑ... Ес тата, Митрахван пиҗҗе мӗн ӗҫпе? Сан пата тухтӑр йанӑ вӗт?

— Лашана сула пулҗӗ те...

— Пӗлетпӗр... Пал Миххалҗ, Митрахван пиҗҗен лашине пӑхрӑна?—терӗ претҫетаттӗл.

— Лашине җӗртсех хӑвартӑм. Пӑртак сула пулнӑ та,—терӗ тухтӑр.

— Ну, вот, илтрӗне? Айта, кӳл те вӗҫтер, Митрахван пиҗҗе... Тешурнӑй исполниттӗл!

— Ё́пӗ.

— Мука Ваҫҫине җӗнсе килха!

— Паҫӑрах килнӗ вӑл. Ак, хӑй те кӗҗӗ... Ну, кала Ваҫҫа.

— Пӗлетӗп. Каласа вӑхӑта иртерес мар. Ме сана вӑрман пилетне. Кай та кас. Пулӑшком җленӗсем турттарса парӗҫ. Пурте: кайапӑр терӗҫ.

Лаптак Мӗтри нумайҗен пӑхса тӗлӗнсе ларҗӗ. Ҫынсем килеҫҫӗ те, пӗр сӑмах калиҗҗен ӗҫе пӗтерсе кайаҫҫӗ. Ҫекси пуҫлӑхӗсем тусан кӑларса ӗҫлеҫҫӗ.

— Мӗн мурла йапала ку?—тет Лаптак хӑй ӑшӗнҗе. — Кӗнӗ кӗменех ӗҫ туса йараҫҫӗ. Пурне те пӗлеҫҫӗ, йапшар.

Ҫак вӑхӑтра йал кулакӗ Шампа Ласӑрӗ пырса кӗҗӗ. Кӑна курсанах:

— Ес ыйтнине пама пултараймастпӑр. Налок хуҗӗ ҫинҗе мӗн җул кӑтартнӑ, ҫавӑн җулах тӳлетӗн, терӗ претҫетаттӗл.

Ласӑр ӗнсине хыҫрӗ те 99 тенкӗ те 99 пус тӳлесех хӑварҗӗ.

— Вот, шуйттан!—терӗ Лаптак хӑй ӑшӗнҗе.—Ласӑр кӗсйинҗе вунӑ җервонӗс иккенне ӑҫтан пӗлнӗха вӑл? Укҫине кӑлариҗҗенех пӗр пус кайалла пама хатӗрлесе хуҗӗ, җорт Сахарӗ... Ехе! Кун ӗҫне җасах тӑваймӗ. Җакаланӑнха куппа, тесе шухӑшларӗ Лаптак, Майи-

# Çексисене шыраса...

Йалсовеҫӗсем çумӗнҫи çексисем наҫар ӗçленӗ. Хӑшпӗр йалта çекси ҫленӗсен çпискисем те çухалнӑ. (Отҫотсенҫен).



— Шупашкараллаши?

— Çавӑнталлаха. Йӑтӑ тупса параҫ, терӗç те.

— Çексисем шӑрши те çук пулсан, темӗн,—тупаймӗ йӑтӑ̈та.

мӑй Хӑвакли кӗвине курсан.

— Аллимент пирки пуҫ, Хӑвакла? Сутисполниттӗл пымарим?

— Çук çав...

— Как çук? — терӗ сутисполниттӗл каргишӗнҫе.—Еп сана йал тӑрӑх шыраса çӳретӗп. Мӗ укçӑна! Пӳрократла хӑтланма йуратат‌ӑр... Кунта çирӗм пӗр тенкӗ. Миçе уйӑхшӑн илнине хӑвах пӗлетӗн.

— Кӗскерех калаç!—терӗ претçетаттӗл исполниттӗле.

Исполниттӗл йанрама ҫарӑнҫӗ. Хӑвакла тухса карӗ.

Лаптак Мӗтри ларҫӗ-ларҫӗ те:

— Сотомпа Комор кунта. Иумах йама та пулас çук ӗнтӗ, хӑйаматсемпе тесе мӑкӑртатса тухса карӗ.

* * *

«Капкӑнӑн» 2-мӗш номӑрне вулакан йулташ 2-мӗш странитса вуласа тухрӗ те, лаҫ, çапрӗ сӗтеле шурналпа.

— Пулман ку ӗç, пулас та çук, терӗ.

Райӗçтӑвкомӗн совстроиттӗлствӑ инструктӑрӗ Ҫӑваш республӗкӗн карҫӗ çине тем пек тинкерсе пӑхрӗ, анҫах, Касмантургапуç йатлӑ йала тем парсан та тупаймарӗ.

Епӗ те, кун пек ӗçлекен совета план тӑрӑх килес çул шӑтмалла йуманран тунӑ турга йаҫӗпе пулмалла çӗнӗ йалта çеç тупса çыртӑм.

ЕТМЕН А.

# КУМ.

Шăмат пасарĕнҫе. Халăх кăткă пек кĕшĕлтетет. Пĕрисем тутар лапкисем ҫумĕнҫе арăмсене ваҫҫи саппунлăх илес, тесе сĕртĕнсе ҫӳреҫҫĕ, теприсем—ҫунисем ҫинҫе паранкă кукăҫпе вупăл кăшласа лараҫҫĕ, хĕрсем йашăсем умĕнҫе сăмсисене каҫăртса тăраҫҫĕ, йаш аҫисем йурри вĕсен хушшинҫе тĕккеленсе ҫӳреҫҫĕ.

Мăнтăр Хĕлĕп пасара ҫитсенех лашине хваттере кĕртсе тăратрĕ. Хăй пасаралла,—ĕлĕкхи пĕлĕшсене курса пули тесе, тухса угрĕ.

— А-а, Хĕлĕп Иекорҫ! терĕ хваттер алăкĕвҫен тухнă тухманах Тăрăнсем Хитров Мăнтăр Хĕлĕпе ал парса.

— Сторовă, сторовă. Есĕ сыпса тухма та ĕлкĕртĕни? Ытла веҫҫолăйҫке...

— Еп веҫҫолăй маррине хăҫан та пулсан курни вара, есĕ, Хĕлĕп Иекор...

— Ара, вăл, ҫавă таха, анҫах... сана йалта мĕнле?—Сӳйлавсем...

— Суйлав прависĕр хăвармарĕҫи, тесе каласшăни мĕн есĕ? Ан хăра, Хĕлĕп Иекорҫ... Хитров не турах, Хитров правасăр йулмасť. Хитровăн тем тума та ăс ҫитет,—ҫуса мар тăк, кустарса, теҫҫĕ вырăссем,—мухтанаť Хитров куҫĕсене выҫатса.

— Мĕнле ҫăлăнтăн ара есĕ, мĕнле? Каласа парха мăна! Ĕмĕр манмăп..

— Ха! йăвăр ĕҫи вăл?.. Иртнĕ ернере арăм аҫа ҫуратса паҫĕ. Кумине йалĕҫтăвком пуҫлăхне турăмăр. Ытгине хăвах пĕлетĕн. Авҫах, епĕ сана кун ҫинҫен ним те каламан. Каламан. Атто!..

Ҫапла пуплерĕҫ пасарта икĕ пĕлĕш.

* * *

— Ма ытла ҫас тавăрăнтăн тата, терĕ Хĕлĕп арăмĕ упăшкине хирĕҫ тухса. Хĕлĕп арăмне хирĕҫ сăмах хушас вырăнне пĕр-ик минут тинкерсе пăхса тăҫĕ те:—карҫăк санăн кумма тумалли хăҫан пулаť ҫак, терĕ.

— Мĕн мур лепĕртетĕн ара есĕ?—ҫиленнĕ пек пулҫĕ арăмĕ.

— Лепĕртетсе марха унта. Кала есĕ— хăҫан?..

— Тепĕр ернерен пули?!

— Ну!.. Вăт телей... Ну ҫасрах ҫуратса пар еппин йуратнă тусăм.

* * *

Аҫа йатне хунă кун йалĕҫтăвком пуҫлăхĕ Хĕлĕп патĕнҫе кĕрекере ларať.

Пыр ҫемҫелиҫҫен пыллă сăра ĕҫсен, куҫ пуҫ умĕнҫе пĕр йапала иккĕн курăнакан пулсан:

— Ну Ваҫли кум хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ ман нушана... май килмĕши ҫав правă пирки?,—терĕ Мăнтăр Хĕлĕп иалĕҫтăвком пуҫлăхĕ йенелле сĕвенсе.

— Ай кум, мĕн калаҫан вара!.. Хамăр ĕҫ вăт. Епĕр тăвас тесен, пур те пулĕ. Ыранах Ҫĕрпӳве кайса майласа килетĕп.

Тепĕр кунне Мăнтăр Хĕлĕп йури ҫĕн кĕрĕк тăхăнҫĕ те, ним сăлтавсăрах урам тăрăх тухса утрĕ.

— Пăхăр ĕнтĕ Хĕлĕп Иекорҫ ҫине. Хĕлĕп Иекорҫ тошĕ не турах, тесе утať Хĕлĕп Хитров сăмаххине аса илсе.

— Ăҫталла ҫуптаратăн тата Хĕлĕп пиҫи?

— Иалĕҫтăвкомне кайас тетĕпха.

— Есĕ Ваҫли Антонҫ патне кайатăн пулмалла та, Анҫах ăна пайан ир милитсисем темшĕн Ҫĕрпӳве тытса карĕҫ.

— Мĕн, мĕн... милитсисем тетĕв? —хăраса ыйтрĕ Хĕлĕп.

— Ҫапла. Мĕншĕн арĕсленине пĕлейместĕп.

Мăнтăр Хĕлĕп ҫавăнтах вăрт кайалла ҫаврăнҫĕ те:

— Тьфу, пурнăҫи вăл!.. Такăшне кумма туса ырă пулмалла ĕнтĕ, тесе йатлаҫса килелле утрĕ.

РОНИ.

## Пулҫнитсара.

Тухтăр:—Мĕнпе аптратăн?
Ҫирлĕ ҫын:—Ĕҫкĕпе.
Тухтăр:—Ҫас-ҫасах ĕҫетне ес?
Ҫирлĕ ҫын:—Ҫулталăкра ултă хут.
Тухтăр:—Нумайа пыраťи ĕҫкӳ?
Ҫирлĕ ҫын:—Икшер уйăх.

А.

## Латтинла.

— Автотор, мĕн тени пулаť?

—У-и? у пулаť акă мĕн: пирĕн ҫулсем, ах тур,—тени пулаť. Латаинла у.

## Суйланӑ ђух.

Кӑҫал сосетсене кирлӗ мар ҫынсем сахал суйланнӑ (отђотсенђен).

**Кулака**



пролеттари ђышкине кӑтартнӑ.

**Хуликана**



ҫӑвархланӑ.

**Растратђӑка**



сута панӑ.

**Ёҫке йуратакан**



мухмӑрласа йулнӑ.

## Ёҫкех пӗтерет...

Ёҫке кайма арӑмпала
Хатӗрлентӗмӗр.
Лаша кӳлсе, урампала
Ҫӗмӗрттертӗмӗр.
Лаша йуртаҫ. Ҫӗмӗрттерсе
Ёҫке ҫитрӗмӗр,
Хуђӑмсене пиллеттерсе
Пӳрте кӗтӗмӗр.
Ёҫке кӗрсен хуђӑмсене
Савӑнтартӑмӑр,
Сӑрипеле ереххине
Йӑвантартӑмӑр.
Шӑпђӑксем пек савӑнтарса
Иур йурларӑмӑр,
Сар кайӑкла саркаланса
Ташша йатӑмӑр.
Хайхи, епӗ ывӑннипе
Лартӑм ҫак ҫине,
Арӑм татах савӑннипе
Иађӗ ташшине.
Кӗҫ сисмен те,—
Иут упӑшка
Тӑђӗ ташлама,
Ман арӑмпа харӑс тӑрса
Иурӑ йурлама.
Иуг ҫынпала ташланӑшӑн
Ђунӑм тӑвӑнђӗ.
Арӑм мана пӑрахнӑшӑн
Кӑмӑл хуҫӑлђӗ.
Тарӑхнипе еп арӑма
Ҫапрӑм пуҫӗнђен
Иури мар та—„Неђђайнӑпа"
Лекрӗ куҫӗнђен.
Сылтӑм куҫӗ сиксе тухрӗ,
Иунӗ сирпӗнет.
Арӑм:—сана уйрап, тесе
Иӗрсе63 каларӗ...
Пуђнитсӑран хутсем илсе
Сута тӑратрӗ.

———

Ех, тур ҫапман!
Шуйттан матки!..
Пӗтерђӗ мана:
Киле ҫурта ҫурма туса
Пађӗҫ маткана.

Иехвин К.

———

Шупашкарпа Канаш хушшинђе Автотор пулсан, миҫе ҫын лашасӑр, тӗнӗлсӗр йулӗҫ-ши?

—

Пирӗн писсаттӗлсен хура кӗркунне те шӑпђӑк йурлаҫ, шартлама сивӗ кун —лапка йур ҫӑваҫ.

# Авалхи ђăваш ђĕлхипе.

— Есĕ, Иаҫку Иванђă, ку йахăнта «Ђăваш йалне» вулакалани?

— Ĕнер ҫеҫ вуласа тухрăм, Униҫĕм муђи, 11—12-мĕш номĕрне. Тĕрлĕрен хыпар пур. Акроном Никиттĕн «Иалхуҫалăхне уй ĕҫĕ йенђен реконструксилесси» ҫинђен ҫырни те пур; темтепĕр ҫинђен те пур.

— Мĕн йапала вăл, «лекартуксилесси» тени? Ҫĕнĕ сурт вăрлăх тавраш мартăрҫке?

— Лекăртуксилесси мар, реконструксилесси. Вăл авалхи ђăваш сăмахĕ пулмалла. Есĕ, Униҫĕм муђи, ђылай ватă ҫын, аллăран нумай иртнĕ, йепле пĕлместĕн тата ҫав сăмаха?

— Ой, пĕлместĕп, шăллăм! Пирĕн ўсĕмре ун пек ђăвашла сăмах пулман. Кайса ыйтса пăх! Варук кинемейрен, вăл 83 ҫула ҫитнĕ теҫҫĕ. Пĕлетех пулмалла.

— Кайас пулĕ. Варук кинемей те пĕлмесен, Никкиттĕн патне, Шулашкарах кайса килмелле пуљ. Хăй ҫырнине хăй пĕлетех ĕнтĕ вăл. Тфу! Ҫыраҫҫĕ, хăйаматсем, тахҫанхи сăмахпа! Ҫырасђĕ хаљхи ђĕлхепе. Т—к.

# Мĕн-ши ку.



**Ан шухăшла, йулташ! „Капкăнăн“ 14-мĕш странитсине вула та, хăвах пĕлĕн.**

# КАМ КУ?



Ку-и? Ку Сĕнтĕрвăрринђи налок инспектăрĕ. Лараť вăл кăпинетĕнђе те ҫыраť:

„Пиндиковскому О-ву Потребителей.

Предлагается на 8 января с/г. к 9 часам утра выслать в Марпосад в канцелярию Налогоинспектора своего представителя захватив с собой книги и дела за 27—28 оперативный год, для выявления оборота на обложение уравсбора за 1928—29 год.

За не исполнение сего будет наложен штраф.

Ал пуснă. Исхоťашђи номăрне лартнă. Анђах, потрепиттĕл ушкăнне: «арăмна та кала, вăл та хăйпе пĕрле ухват-турђкисене илсе килтĕр» —тесе ҫырма мансах хăварнă.

Ма хăй тухса ҫўреместха вăл? Ăна отђот йанă ҫке, тата мĕн кĕнекисем ыйтаť вăл? Мраљкка.

Курмастăр-и? Ав ђĕрни вĕҫне тасатса лараť. Пушă мар, снаш.



# Хӗрхенӗҫха.

— Матви Василҫ, кӗрха кӗр,—тет Исак иртсе кайакан, паттентсӑр сутуилӳпе хытланакан Матвийе ҫӳреҫине шаккаса.

Хӑй сӗтел хушшине кӗрсе ларнӑ, умӗнҫе темӗн купийех тӗрлӗ хутсем, пӗр аллинҫе шут, теҫӗр аллинҫе хӑйӗн виҫӗ ҫулхи хӗр аҫи аштӗн сухал пӗрҫисене шутласа ларать.

— Пайан РЁК-ран хут килҫӗ. Ыран каҫпа халӑх ҫинҫе мана хам пӗр ҫулталӑк хушшинҫе мӗн ӗҫлени ҫинҫен отҫот тума хушаҫҫӗ вӗт. Мӗнле иртерсе йарас?—тет Исак, Матви кӗнӗ кӗменех. Хӑй ӑшне вут хыпса илнӗ пекех ӗштеленет.

— Ларха, лар! Арӑм, Матвийе шӑннӑ ҫинҫен кӑштах...

— Мӗн хӑрамалли пур?

— Хӑрасси... Халӑх укҫи... Вӑрман...

— Пӗрте ан хӑра. Ана хамӑрах тӑватпӑр. Хамӑр суйланӑ сана. Пире сийен туман... Есӗ каҫпа пирӗн пата пырха унта.

— Вог, вот! Мӗнле те пулин тӑвасҫӗ. Ӗҫре те сирӗн йумахран тухмарӑм вӗт: есӗр мӗнле тӑвас тенӗ, ҫавӑн пек туса пытӑм. Хӑвах пӗлетӗн, кӑҫухне пуйансем майлӑ ӗҫлемелле мар тенине.

— Ҫавах ара, куртӑмӑр, аван ӗҫлерӗн. Ҫитес суйлавра та санах суйлӑпӑрха.

— Охок! Арӑм, илтрӗни? Мӗн калать вӑл? Ҫитес суйлавра та санах суйлӑпӑр, тет.

— Ара-а-а, вӑхӑҫӗ ҫитмесӗрех ан савӑнха. Ир автакан куккукӑн пуҫӗ уксе ҫурӑлнӑ, теҫҫӗ, санӑн та ҫавнашкал ан пултӑр.

— Вӗсем сана калӗҫ, вӗсемшӗн мӗн!

— Пӗлсен... вӗсене мар, сана анҫах йавӑр пулать. Ҫавна пӗл есӗ.

Исак арӑмӗ апла калачӑ хыҫҫӑн кӑштах шукӑша карӗ: ҫӑн калать пек туйӑнать. — Ҫӑнах та, вӗсене мӗн? Мана анҫах йавӑр килет вӗт,—тет хӑйӗн ӑшӗнҫе. Кӑштах шукӑшласа тӑнӑ хыҫҫӑн:—ҫук, есӗ нимӗн те пӗлместӗн, сана пӗлме те кирлӗ мар. Халӑх вӗт!—терӗ те, хӑйӗн каҫака тирӗнҫен тунӑ пилӗк таран кӗрӗкне тӑхӑнса таҫта тухса карӗ.

Каҫпа. Халӑх Урхамах Петти патне пухӑннӑ. Карҫӑкӗ, кӑвак ҫӳслӗскер кӑмака тӑрӗнҫен пӑхса выртать. Исак сӗтел хушшинҫе кӗсйинҫен ҫӑкӑр хыттисене кӑларса кышлакаласа ларать.—Ӗҫ нумай вӗт, апат ҫиме те вӑхӑт ҫук,—тесе ларать. Унӑн ҫумӗнҫе Матви Васил, хӑйӗн тантӑшӗсемпе каласса ларать:—ҫаплах, ӗҫӗ сахал мар ӗнтӗ вӑл. Ӗҫлессе те нумай ӗҫлетӗн, тепле ҫирлеместӗн,—тесе ҫӗлӗмне вӗҫсӗр паклаттарать.

Ҫылайҫҫӗн шавлакаласа ларнӑ хыҫҫӑн алӑк патӗнҫен пӗри, ҫӗлӗм тӗтӗмӗпе аптраса ҫитнӗскер:

— Пуҫлас. Мӗн вӑхӑта иртермелли пур,—тесе йаҫӗ.

— Пурте пухӑнса ҫитнӗ-и? Васкас мар. Иапала йӗркеллӗ пултӑр, — тет Матвийӗ. «Халӑх ҫынни» вӗт! Йӗркине ыйтать!

— Пуҫлас! Сахалах мар вӗт,—тесе кӑшкӑрса илҫӗҫ хыҫалтан виҫҫӗн—тӑваттӑн харӑс.

— Апла пулсан пуҫлас. Пайанхи пухӑва уҫӑлнӑ тейӗпӗр!

Приҫитиум суйласа лартнӑ хыҫҫӑн Исак «отҫот» тума тытӑнҫӗ.

— Халӑх, мӗн отҫот тӑвасси, хӑварах куртӑр епӗ мӗнле ӗҫленине: пӗрне сивӗ сӑмах каламан, тӗрлӗ хутсем тума пынисене туса панӑ, ытти пысӑкрах ӗҫсене пӗҫҫен, халӑхсӑр туман...

— Тӗрӗс, хамӑр мӗн тӑвас тенӗ ҫавна тунӑ. Мӗн унта каламалли пур,—тесе кӑшкӑрса илҫӗҫ „йулташӗсем".

Исак отҫотне ҫапла иртеркелесе йаҫӗ. Ӗҫне пурте ырлаҫҫӗ. Аван ӗҫленӗ, халӑх сӑмахӗнҫен тухман!

Исак хыҫҫӑн ревиҫи комиҫҫийӗ отҫот тума тытӑнҫӗ. Пӗр ҫамрӑкскер актӑсене сӗтел ҫине сарса хуҫӗ:

...Иртнӗ ҫула Сороккин ҫунса кайнӑ хыҫҫӑн ӑна вӑрман памалла тунӑ, анҫах хӑй сасартӑк вилсе кайнӑран, Исак вӑрмана пуйансене панӑ... Халӑх анисене тара панӑ укҫа 159 тенкӗ йахӑн пухӑнмалла пулнӑ, вӑл пӗр пус та ҫук...

Иулашкинҫен:—Исака сута памалла турӑмӑр,—тесе хӑйӗн сӑмахне пӗтерҫӗ. Тӗпелте лараkансем пӑтранма пуҫларӗҫ.

Исак хӑй ҫумӗнҫе ларакансем ҫине пӑхса илнӗ хыҫҫӑн:—манмӗҫ, хӗрхенӗҫха—тесе, халӑх ҫинҫен тухса карӗ.

КВАСКОВ Н.




# Ай-хай, мăнтарăн Ахтăтурĕ.

**(Кăмăллăн тăрăхласа çырнă çулйĕр ђастушкисем. Хыпарсемпе малтанхи сăввине вуласа каламалла, ыттисене йурлама пулаť).**

Ђăваш респуплĕкĕнђи Автотор уполномођђĕннăйĕ Унтри Унеçĕмĕ ђухăнсен конферентсиңђе пысăк сăмах тухса каланă,

— Çулйĕр пулман пирки, Улатăр йенђе пĕр сĕт-турăх ертелĕ пăтланнă, тет.

— Пайторкпа Ђăвашсойус Канашпа Шупашкар хушшинђе çÿреме 2 автопус тата 1 крусовик илеççĕ.

Çулĕсем... **(Хыпарсенђен).**

Ай-хай, çулĕсем-те-çке пирĕн, çулĕсем, йĕрĕсем...
 Инкекçке! Ай-хай, çырлахтăр, вахтăрах тă турă!
Çулсемех хываççĕ тăр ђĕрере
 Темĕнле хулăм та мăнă сасăсем:
— Çăлăнăç пурах, пур, тет—
 Тытса ђараймийех çивђĕ пулаť, тет
 Унеçĕмĕн çулйĕр Ахтăтурĕ.

Ай-хай, çулĕсем-те-çке пирĕн çулĕсем—
Аилăшĕсем вĕсен иквиçĕ çухрăм та çурă;
Кашни ура та, ай, йарса пусмассерен,
Хура тинĕс пек хумханса йулаť шывĕ-шурĕ.
 Хушса йурламалли:

| | |
|---|---|
| Ай-хай, мăнтарăн, | Ай-хай-йахтă, мăнтарăн |
| Унеçĕм Ахтăтурĕ, | Ђăвашсен шывĕ шурĕ |
| Те пулаť халех у, | Те ђупайаť Ахтăтурĕ? |
| Те пулмасť?! | Те ђупмасť? |

Йуртсам халĕ, утăмçăм, йурт ес, йурт, хура турă ут,
Çакă тăвăр та çулсенђен тухса, ай, çитиђђен;
Кÿрсем, кÿр есĕ, Унеçĕм! Туртса тух Ахтăтур—
Утăмăрсем кĕрсе ÿксе те вилсе пĕтиђђен.
 Хушса йурламалли: Ай-хай, мăнтарăн...

*Филиппăв хут. ӳкерţĕкĕ.*



Çӳрен çеç-и? Кăвак-и? Турă-и ţăваш уţĕсем—
Пĕкĕрен те çӳлĕţţĕ-и çак вĕсен пуçĕсем?
Пĕрререн пĕрре çеç ţăпта леçрĕмĕр хулана—
Хăмăла тăрăнмаллах-та-çке усăнţĕç утсен пуçĕсем.
Хушса йурламалли: Ай-хай, мăнтарăн...

Леçмеллеţţĕ сĕт-турăх хулана леçмеллеţţĕ—
Çуна çулĕ пуласса кĕтсе, ай, тăтăмăр;
Пĕтмеллехţĕ те пулĕ ушкăн, пĕтехţĕ—
Ахтăтур пуласса кĕтсе, ай, тăтăмăр.
Хушса йурламалли: Ай-хай, мăнтарăн...

Шупашкарăн-та-çке кĕселленнĕ лăţ-лаţ! çапçут лăкăрĕ
Миçе калуш кăçал вăл тытса та, ай, хыпрĕ пуţ?
Ахтăтур та пырас çулăмăрсем çинţе—пурĕ
Миçе ут кăçал путса та, ай, хытрĕ пуţ!
Хушса йурмалли: Ай-хай, мăнтарăн...

«Ахтăтур» тенĕ сасăсем пуç çине ӳкеççĕ:
«Çулйĕрсем пулмасассăн сотсиалисăм çук мари?»
Ахтă-тă-пуссем килсе тулаç, тет, ут йĕрсем пĕтеççĕ
Ут йĕрĕсем çинţен тепре те йурласа йулари!
Хушса йурламалли: Ай-хай мăнтарăн...

Ай-хай, çулĕсем-те-çке пирĕн, çулĕсем...
Ай-хах! çырлахах тăр, вахтăрах тă турă;
Пулаççех,—йулаççех пулĕ таха йăвăрлăх çулĕсем—
Килейсе те ларинţţĕ ţасрах çулйĕр Ахтăтурĕ.
Хушса йурламалли:

Ай-хай тă! Мăнтарăн
Унеçĕмĕн паттăр Ахтăтурĕ
Пуласса пулаť таха у,
Ун?.. Пулми мар!..
Ай-хай-хах тă! мăнтарăн

Ţукунçулăн пулĕ çулĕ—
Правус пек те ţупаççĕ тимĕр уţĕсем
Тыт та лар!
Анţах,—пайан мар...
ВАÇАНККА.



# „Хĕрарăмсен“ пуххинȥе.

Отȥот кампpани вăхăтĕнȥе кăçал хĕрарăмсен пуххисем наȥар иртнĕ. Вĕсене иртерме малтанах хатĕрленсе тăман. Хăшпĕр йалта хĕрарăмсен пуххинȥе арçынсем кăна пулнă. Пĕр-ик хĕрарăм пулнă пулсан та, вĕсем тĕпелелле иртме те хăйайман.

(Суйлав ĕçĕн маттериалĕсенȥен).

— Аӊук инке, пухăва тух!—шаккаĭ ȥўреȥерен пуху калакан.

— Хĕритун,—тет арăмĕ,—пухăва кайамха...

— Мĕн пĕлетĕн ес унта кайса? Аȥуна кам пăхаĭ? Ак, хам кайса килĕп...

Аӊук ȥĕнмерĕ. Хĕритун хĕрарăмсен пуххине тухса кайрĕ.

Хурал пўртĕнȥе пуху иртерме килнĕ уполномоȥȥăннăй лараĭ. Хурал пўртне арçын хыççăн арçын кĕрет, пĕр хĕрарăм та çук.

— Ма сирĕн арăмăрсем килмерĕç, хĕрарăмсен пуххи вĕт ку!—тет.

— Мĕн пĕлеççĕ вĕсем кунта?—Харах кăшкăрса пăрахрĕç арçынсем.

— Хĕрарăм нушине есĕр пĕлместĕр вĕт?

— Ан култар. Хам арăма мĕн кирлине ес каламасан та пĕлетĕп, терĕ Хĕритун.

— Ере, ес калан,—терĕ Симун,—ухват аври çунса татăлнă мая арăмăн. Таккаĭ, таккаĭ,—çук, лармасĭ. Вăшваш тытрăм та, лартса та патăм. Аппаланаĭ унȥȥен. Хам арăмăн нушине пĕлмен пулсан, ухват аврине кам лартса параĭȥĕ.

— Çапла пулмасăр. Хĕрарăм нушине арçын пĕлмесен ĕç пулати вара? —терĕç харах.

Хĕрарăмсен пуххине иртерме килнĕ

# Шупашкарти хăйматлăхсемпе Коçтĕн хуçа.

Мăнмарка йалĕнче (Шуп. р.) çăптана шартлаттараççĕ кăна. 240 çын 80 станокпа хĕртет. Икçĕр хĕрĕх тухăн, икĕ кулак: Коçтĕн, тата Иван Филипçă и Ко.

Çапаççĕ çăптана тухăнсем. Хĕртеççĕ алла кулаксем.

— Çитет Коçтĕнпа Филипча пуйтарма!..

— Уçас копператтив!—терĕç çамрăксем.

Кулаксем çалăшшăн пăхса илчĕç:

— Хăтланăр, хăтланăр, выçă пыйтăсем!—терĕç вĕсем.

Çамрăксем копператтив уçрĕç. Правлени претçетаттĕлĕ Чăвашсойусран çĕр пăт мунчала тийесе килчĕ.

— Ну, çапăр! Мунчала лайăх. Ĕç хакĕ 13 тенкĕ çурă. Коçтĕнсем 12 тенкĕ çеç параççĕ вĕт!

— Çапас, çапас!—теççĕ çленсем.

* * *

Раштав праçникĕ иртрĕ. Иал çине мухмăр кикенĕ çеç йулчĕ. Пуçсем çурăлас пек ыратаççĕ.

— Ах, уçасчĕ мухмăра!—теççĕ çăптаçăсем.

Коçтĕн сисет. „Хĕрхенет" вăл çăптаçăсене, мухмăрпа супнăскерсене.

— Мĕн калаçмалли пур унта! Пуçтарăнăр Иван Микихверĕ патне и.. мухмăр та çук.

Микихвер патне мухмăрпа анкă-минкĕленĕ халăх пухăнать. Копператтив членĕсем те, член маррисем те пычĕç. Коçтĕн çур витре ерех лартрĕ. Пуçланчĕ ĕçкĕ. Унтан,—çапăçу.

— Еçĕр!.. Çийĕр!.. Коçтĕн кам иккенне паллăр!—тет Коçтĕн.

Нумай ĕçрĕç. Нумай çапăçрĕç. Коçтĕн хăй ĕçне турĕ.

* * *

Копператтив правлени претçетаттĕлĕ йал тăрăх лĕпсĕртетсе çÿрет:

— Мунчала илме пыратна?—тет вăл членсене.

— Коçтĕнран пĕр çĕрлĕх илнĕччĕ те, малтан çавăннех çапса парас пуч... —теççĕ ăна хирĕç. Коçтĕн чĕлхипе калаçаççĕ. Копператтива путлантараççĕ.

М. Ентри.

Ентри йулташ! Есĕ Коçтĕна хирĕç ан тăр! Унăн Шупашкарта хăйматлăхĕ пур. Акă Тапкă йулташ çырать:

«Чăвашаластипромыслакопсойусĕ чаçнĕксен укçине опорог тума илсе, копператтивсемпе ертелсене пулăшма кирлĕ, тет.

Тăрăшсах хăй «наопорот» тăвать: çăпташăн копператтивсемпе ертелсене 32 пус парать, Коçтĕн хуçана 33 пус тÿлет».

— Пĕрер пус «наопорог — тет Тапкă.

Çĕртен—пĕр тенкĕ. Пинрен—вун тенкĕ. Мăнмаркари мухмăрлă çăптаçăсене мухмăр уçма çитет вĕт вăл?

---

çын арçынсене йăлтах ĕненчĕ:

-- Пуçлас пуç, апла пулсан?

— Пуçлас, пуçлас!—çухăрса йачĕç арçынсем.

Уполномоченнăй хĕрарăма совет ĕçне хутшăнтарасси çинчен токлат, вăрăм токлат турĕ.

— Кашни хĕрарăмăн, куххаркăн патшалăх ĕçне хутшăнмалла... Ур-р ра! —терĕ йулашкинчен.

Анчах, ун хыççăн никам та уралатмарĕ. Нумайĕшĕ йăвăррăн сывласа йачĕç.

— Ыйтса пĕлес текенсем пури? Çук.

— Тухса калас текенсем пури? Çук. Ма калаçмастăр?

Е, мĕн калаçмалли пур унта? Хĕрарăм нушине ахаль те пĕлетпĕр епĕр, —терĕç арçынсем.

Тулта, алăк умĕнче ик хĕрарăм нумайччен шăвса тăчĕç.—Хамăр нушасем çинчен районтан килнĕ майрана пăртак та пулсан каласа кăтартасчĕ, теççĕ.

«Майран» тепĕр йала каймалла. Хурал пÿртĕнчен тухрĕ те, çуна çине ларчĕ.

— Майра инке! Калаçма йурать-и сапна терĕç ик хĕрарăм.

— Иурать те, анчах... вăхăт çук. Района пырăр, тесе хăварчĕ.

* * *

Майра çул тăрăшĕпе шухăшласа тĕлĕрсе пычĕ:

— Ма пуçтарăнмарĕç-ши хĕрарăмсем? Ку ик хĕрарăма мĕн кирлĕ пулнă-ши? Ех, хĕрарăм пурнăçĕ!..

# Сӑмса урлӑ ҫышкӑпа.



## Анкӑ-минкӗ ҫекреттар.

Сыснана сӗтел хушшине кӑна ларт. Вара вӑл урине те сӗтел ҫине хурать, теҫҫӗ.

Тракушкӗн (Х. Ҫутай р.) йалӗҫтӑвкомӗ ҫырусҫӗ Иефремӑв Иван пуҫне таҫта ҫитиҫҫенех ҫӗкленӗ. Хайне хӑй тем вырӑнне хурать. Кӗнҫелер ӗҫне пӑтраштарсах йаҫӗ. Хӑй—комсомолӗс, тет Е... йулташ.

Ку сыснана сӗтел хушшине лартнӑҫҫӗ те, анҫах, урине ҫӳле ҫӗклеймерӗ. Пуҫне те ытла ҫӳлӗ ҫӗклеймест ӗнтӗ хаҫ вырӑнтан кӑларса сирпӗтнӗрениӗ кикен ҫинӗ сурӑх пек анкӑминкӗленсе ҫӳрет.

## Реппеттитси.

Паникасси (Шуп.р.) претҫетаттӗлӗ хӑй йалӗнҫи пухӑва иртерме лашапах кайнӑ. Куҫӗ-пуҫӗ симӗсленсе кайиҫҫенех ӗҫнӗ пулнӑ та, ҫуни ҫинҫен папкисемпе пӗрлех тухса ӳкнӗ. Х. Ҫ.

Тухса ӳкмелле выҫама реппетитси тунӑ вӑл. Хаҫ ҫуна ҫинҫен, тепринҫе —советран тухса ӳкет ӗнтӗ вӑл. Камит!..

## Кумахри пекех.

Оҫӑкасси (Тутаркас р.) йалӗнҫе Хмеҫов Иван пурӑннӑ. Пурӑнсан, пурӑнсан,—ҫунса кайнӑ. Ку айвана тем тума, вӑрман кирлӗ пулнӑ.

Кайать, кайать, кайать, кайать хайскер райӗҫтӑвкома. Татах кайать, ултӑ хут кайать... Утать, утать, утать,—264 ҫухрӑм шӑп утать. Шухӑшлать вӑл угнӑ ҫух:

— Ех, кӳлесҫӗ те Тутаркас РӖК-нҫи пуҫлӑхсене кутлӑх тӑхӑнтартса, 264 ҫухрӑм хӑваласҫӗ, тет.

«Капкӑн» шуҫӗпе, вӗсене ытла хытӑ хӑвалама йурамасть пек туйӑнать. Ҫуман лаша ҫас тарланӑран калатпӑрҫке.

## Акӑ пӗри.

Етем тенӗ йапала пӗр пуҫлӑх ӗҫет те, пӗр тенкӗлӗх ҫапӑҫать вара.

Ҫалӑмкассинҫи (Шуп. р.) йалсоветӗн претҫетаттӗлӗ Пелов раштав каҫ иккех ҫетвӗрт самокон лакканӑ. Те ҫавӑнпах пуҫӗ хӗрнӗ,— Алекҫейӗв йулташа лайӑх шакканӑ вара. О ш м ӑ ҫ.

Ехер те мехер, тата икӗ ҫетвӗрт хунӑ пулсан, йала пуҫхӗрлӗ тӑрса та кӑтартаҫҫӗи тен.

## Ак тата тепри.

Пӗр ӗҫкӗн мухмӑрӗ ҫӑнах та суйлавран суйлава ҫитиҫҫенех пырать иккен.

Ҫаканар йалӗнҫе ҫамрӑксем пухӑвне иртермелле пулнӑ. Унта отҫот туса пама Ишекри (Шуп. р.) потрепиттӗл копператтивӗн претҫетаттӗлне Иаркейӗв й-ша ҫӗнтернӗ. Ҫаканара ҫитсен Иаркейӗв йалти йатлӑ ҫынсене шырама тытӑнать. Ҫекреттар Леппин патне пыҫӗ те:—килте ҫук, терӗҫ. Претҫетаттӗл патне карӗ—тепӗр йала отҫот пама кайнӑ, терӗҫ. Пырать каллех Леппин патне:

— Пӗлместпӗр, ҫук вӑл, таҫта кайнӑ, теҫҫӗ.

Кӑмака ҫинҫен, сак мунҫали пек ҫемҫелнӗ, ӳсӗр Леппин сасси илтӗнех кайать.

Усӗрпе мӗн тӑвас тетӗн? Иаркейӗв тухать те кайать. Леппин кӳрши-аршисем:

— Е-е! Ӗнтӗ унӑн, мӗн совета кӗнӗреппех ҫапла. Хаҫ, суйлавкомиҫҫи ҫекреттарӗ пулнӑранпа пушшех алхасать. Правӑсӑр хӑварнисенҫен вҫаткӑ та, ӗҫкӗ те туртать. Иалсовет кӗнҫелерӗн ҫӳреҫисене те ватса пӗтерҫӗ, Ӗнер каҫ ӳсӗрпе пӗтӗм ҫемйине урама хӑваласа кӑларнӑ, терӗҫ.

Вот ку çекреттар! Тӗнҫене михӗ пек таварса силлесен те, кун пеккине тупас çук. Ҫаканарсем:—ку Леппинран ахаҫ хӑтӑлас çук, совета тагах суйласа ӗçсе вилтӗр пӗрех хут, теççӗ пулмалла.

## Кашкӑра сурӑх сыхлама хушнӑ.

Ҫикмеçин (Сӗнтӗрвӑр. р.) йалӗнҫи Мешков Ентрине Аскарин йалӗçтӑвкомӗ самоконпа кӗрешме хут туса парать. Мешков тенӗскер пӗр, Иекӗм йатлӑ çынна ҫӑнах та тыгать. Анҫах, Иекӗм Мешкова пӗр çурпилӗк суха туса пама пулать, тата ураран ӳкиҫҫен ӗçтерет.

— Каçарас пуҫ, хӑйамата... Шалккӑ, тет Мешков. Вӗлтрен.

Аскарин йалӗçтӑвкомӗ, ей! Кашкӑра сурӑх сыхлама, кушака çу хуралçине тӑратма хӑçан пӑрахатӑн ес?

## Милитси мар, политси?

Ҫӳлтикасси Кинер (Шупаш. р.) йалӗнҫи Хохлов Иван 1918 мӗш çулта Хусанта милитсире пурӑннӑ. Пурӑнать пурӑнать Хохлов. Совета та 2 хутҫен суйланать. 2 çул халӑх саççетатгӗлӗ пулнӑ. Анҫах, кӑçал суйлав правине унтан туртнӑ илнӗ.

-- 1918-мӗш çулта милитси пулман, политси пулнӑ, теççӗ йалти суйлав комиççи ҫленӗсем.

Хохлов арӑмӗпе хӗрне правӑ панӑ вара, хӗрхеннӗ пулас.

Тӗлӗнетпӗр епӗр: ку суйлав комиççи ҫленӗсен пуçӗсем ӑçта пулнӑ-ши?

## Сӑрапа ерех исполниттӗлӗ.

Ҫӗнйал Шетмӗ (Елӗк р.) хӗрӗ Уçӑп Марийи Ҫегрик Шетмӗри Арçут йатлӑ çынна каҫҫа пынӑ. Ҫӳр çул та пурӑнаймаççӗ çӗнӗ çынсем,—уйрӑлаççӗ.

Марийе аҫа туса парать. Сут Арçутран алимент шыраса парать.

Сут исполниттӗл Антрейӗв патне пырать те, сӗтел хушшинҫе хаклашаççӗ те хаклашаççӗ... Сӑра, ерех, ӗçмеçиме, кусен çумне-виҫкӗн ҫӗлхе.

Акт çырҫӗç, мӗн турӗç: „Арçутӑн ним çутмалли те çук" турӗç. Касак.

Ӗненме çук. Арçутӑн пури çуки те, Антрейӗвӑн пуçӗнҫе нимскер те çук вара. Пушӑ парапиан ӑшӗ пекех пушанса йулнӑ.

## Преми пама ыйтатпӑр.

Сӗлескер йалӗнҫи (Ҫӗрпӳ р.) комсомол йаҫейккин ответлӑ çыруçӗ Трофимӑв хӗраҫасем хушшинҫе пит „тӑрӑшса ӗçлет".

Пӗрре улаха пынӑ та, Мархва йатлӑ хӗре йарса илсе, çийӗнҫи кӗпине, тата... çурса пӑрахнӑ, ҫышкӑ та паркаланӑ.

Ҫапла ӗçленӗшӗн Трофимӑва „Капкӑнран" парне пама ыйгатпӑр.

Хиралтанӗ.

Парне парайма стпӑр. Пӗррелӗхе „Капкӑна" çакланни те çитӗха.

---

## Пулас лаша ӳыхаран паллӑ.

Хӗрлӗҫутай петтехнӗккӑмӗнҫе III-мӗш курсра вӗренекен Терушкӗн Кирули çакӑн пек сайавлени çырать:

В Атнарскую сельизбиркому.
от гр. Терушкина Андрея Тимофеевича.

Настоящим заявляю сельизбиркому в том, что не правильное нашего семьи. Виду что того, что прошу рассматривать у каждого в отдельности. Кроме того эти лишения нам очень не доволен по сравнению с другими семями. Если взять меня с какой конструкции можно лишить при Сов. конституции. Я как могу лишеным быть при обще-во? Я говорю, что эти решения не ладно: я как член РСДП (т. е. профсоюз) и член МОПР и член Осоавнахима и др. и т. д. и т п. А вина беспартийностей, по сообщая выше всераво я считаюсь лучше с некоторого комсомольца. (Могу представить билеты) и затем я об"явлюсь вас о том, что вы слова промышленность наверно не понимайтесь.

Сообщая выше изложенное, прошу востановить в ряду об-ва.

К сему за К. Терушкин.

23/XI—28 г.

Шӑрҫӑк.

Терушкӗн вырӑсла лайӑх çырма пӗлнӗшӗн «О»—отметкӑ паратпӑр. Краштӑн правине панӑ-и, çук-и,—пӗлместпӗр, килес çул уҫиттӗл правине тем парсан та памастпӑр: аҫасене хӑй ҫӗлхипе инвалитласа пӗтересрен хӑрушӑ.

# „Капкӑн“ ӑмӑртувӗ.




(«Канашӑн» 10-мӗш №-не вула).

## Ӑмӑрту условийӗсем:

1. Амӑртура ҫийеле тухас тесен, есӗ ҫырнӑ йапалунтан ҫынсем ӳкӗрҭӗк ҫинҭи пек кулҭӑр.

2. Кулӑшла йапала ҫинҭен ҫыратӑп тесе, кут-пуҫ халапне ан йар.

3. Тем пек пысӑк йапала пулсан та 3 странитсӑран ытла ан ҫыр.

4. Кулӑшла пултӑр тесе, вырӑсла сӑмахсемпе ан тултар ҫыруна.

5. Ӑмӑрту ваҭҭи пур те ҫырма пултараҫҫӗ. Анҭах, ретаксинҭе ӗҫлекенсем: Иван муҭи (ретаксирен кайнӑ пулсан та), Ваҫанки, Шӑпҭӑк, Етмен ӑмӑртӑва кӗмеҫҫӗ.

6. Ӑмӑртӑва йанӑ ҫырусем. „Капкӑнӑн“ 3-мӗш №-ҭен ҫапӑнма пуҫлаҫҫӗ. Вӗсем ваҭҭи кашни № та 2 странитсӑ пулаҭ.

7. Ӑмӑртӑва йаракан ҫырусен канверҭӗ ҫине «Капкӑн» ӑмӑртуне, тесе ҫырмалла.

8. Ӑмӑрту ийуҥ уйӑхӗнҭе хупӑнаҭ те, ӑмӑрту странитсинҭи йапаласене пӑхсах тухма уйӑрнӑ комиҫҫи кашни ав тӑра ак па рса тухаҭ, мӗнле парнепамаллине паларҭаҭ.

9. Парнесем:

а) 1-мӗш парне: „Капкӑн“ пӗр ҫулталӑка, тата 10 тенкӗ укҫа;

у) 2-мӗш парне: «Капкӑн» пӗр ҫулталӑка, тата 7 тенкӗ укҫа;

ы) 3-мӗш парне: «Капкӑн» 6 уйӑха тата 4 тенкӗ укҫа.

Кусемсӗр пуҫне ӑмӑртӑва кӗнӗ йапаласемшӗн 5 тенке ҫитиҭҭен конорар паратпӑр. „Капкӑн“ ретаксийӗ.

# Пуҫа килнӗ шухӑшсем.

Хӑй ӗҫӗпе мухтанакан ҫын тӗлӗкре кантра йавсан та,—ӗҫлерӗм, тет.

—

Иалтан Шупашкара кайма тухас умӗн арӑмна ҫиҭ ернелӗх кукӑҭ пӗҫерттер: сапас... пӑсмасҭ, теҫҫӗ.

—

Шупашкар коркопӗнҭен ҫӑкӑр илекене ҫӑкӑр ӑшӗнҭен тухакан таракан та иҫӗм ҫырлин туйӑнаҭ.

Совета суйланайман пӗлтӗрхи претҫетаттӗлсене тӗлӗкре те пулин ҭиркуҭарсемпе анкеттӑсем аташтараҫҫӗ.

—

Иалти советсене ҫӗнӗрен суйласа пӗтернӗ хыҫҫӑн ҭиркуҭарсемпе анкеттӑсем ҫырмалли хапрӑк уҫсан, аванҭӗ, теҫҫӗ, ҫынсем.

# Йатманăв терҫĕ.

„Ех, самана! Ытла та йывăр пулҫĕ ку самана ман тĕлтен. Ĕлĕк тем тĕрлĕ аслă вырăнта ларнине хисепе хумасăр, аран-аран тăранмалăх вырăн паҫĕç. Çитменнине нимĕн айăпсăрах парттирен кăларса пăрахрĕç. Мĕншĕн айăплаççĕ-ха мана?

— Иатманăв ĕçке йуратаҫ, теççĕ. Пĕркун, Шупашкара килсен тăватă талăкра вунçиҫĕ полштохне типĕтрĕм ĕнтĕ... Нумай пулаҫи вара вăл? Пролеттари норми анҫах вăл ман шутпа.

— Иатманăв хĕрарăма йуратаҫ, теççĕ ман тăшмансем. Айăплăи вара, епĕ ку йенҫен?Ҫăнах та, епĕ тăваттă авланнă. Пĕр арăм вилҫĕ, виççĕшĕ тура хушнипе пурăнаççĕ-ха. Аҫа-пăҫамсем те пур. Вăй питти çынна виçĕ арăм нумай мар ĕнтĕ. Пуршуйсенҫен шутласан, ку та пирĕн пек пролеттари норми анҫах. Унта-кунта хĕрарăмсемпе выллашнине шута та хума кирлĕ мар. Лайăхрах пăхсан, ку йенҫен те айăп курăнмасҫ...

Иатманăв парăма кĕме йаратаҫ, кайран кайалла парасшăн мар, теççĕ мана курайман тăшмансем. Конешнă, ку сăмахсене çăмăл калама пултараҫ пĕр арăмпа пĕр çемйепе пурăнакан çын. Манăн апла мар çав; пĕрне сараппан илсе парас пулаҫ, иккĕмĕшне—кĕске йупкă, виççĕмĕшне алименг тÿлесе тăр, тата аҫи-пăҫисем те çарран çÿреме пултараймаççĕ. Вара ирĕксĕрех парăма кĕмелле пулаҫ. Парăмĕсем пурах ĕнтĕ. Улатăрти коопперативв лавккисене те ҫылайах памалла, Шупашкарта та ҫылай çынна памалла (Коçтĕна, Саххарăва, Иепруккова т. ыт.); манăн мĕн пур парăмĕ те пине çитеймест.

Çеҫхоссnапшени пуçлăхĕн Малăшшĕвăн ав,—тĕрлĕ уҫрештенисене памалла парăмĕ пин те икĕ çĕр тенке çитет, теççĕ пĕлекенсем. Епĕ хам парăмсене пĕрне те тунмастăп, пурне те татасшăн. Коçтĕнпа Саххарăва иккĕшне 75 тенкĕ памалла та, вĕсене „леш тĕнҫере“ парса татăп пĕр пус таранҫҫенех, тесе сăмах патăм. Ытти парăмсене... аҫамсем профессăра тухса, шалу илме пуçласан тÿлесе татĕçха. Мĕн хăрамалли пур унга? Парăма тунса çылăха кĕме пĕр те шутламастăп.

Пăхсан, пĕр айăп та курăнмасҫ. Пустуйах йат йараççĕ ман çинҫен. Çавăн пирки манăн пурнăç çулĕ те тумхахланса пыраҫ. Акă Çĕпĕрте парттийе кĕме шутларăм.

— Партти пилеҫĕ пулăшаканҫĕ-ха тетĕп. Çук, патне те ан пыр, рекоментатси ыйтаççĕ. Кам параҫ унта мана рекоментатси?

Ҫуптаратăп ҫасрах Шупашкара:— Унта туссем те, йышсем те пур хаҫ, тетĕп. Çук, унта та тумхахсем йĕркипех: пĕр парттийтсă патне пыратăп, теприн патне пыратăп, вăл та куклишке кăтаргаҫ. Çапах, пăсăлса кайнă халăх хушшинҫе ырă çынсем тупăнҫĕçех. Пытăм Павăл Миххалҫă патне.

— Çапла, çапла,—мана, парттийе кĕме рекоментатси памăн-ши? тетĕп.

— Парас, есĕ те мана хăçан та пулсан кирлĕ пулăн, терĕ Павăл Миххалҫă пĕр-икĕ минут арăмĕпе канашларĕ те (пĕлет ăслă çын алла-алă çума кирлине),—пĕр сăмах каламасăрах рекоментатси çырса паҫĕ. Ватă парттийтсă Проккопи Çтеппанҫă, „Сăкăт“ коммунĕнҫи Петров йулташ та рекоментатси парас тĕлĕшĕпе ҫаrăнса тăмарĕ. Тепĕр рекоментатсине Патĕрйел районĕнҫен Шупашкара ĕçпе килнĕ Иван Антонҫ ыйтмасăр паҫĕ, ыйтнă пулсан тен икĕ рекоментатси те пана пулĕҫҫĕ.

Çапла пулăшрĕç ырă çынсем. Вĕсем хама лайăх пĕлеççĕ те, тăшмансем ман çинҫен усал йат сарнине пăхмарĕç. Малашне хам парттийе кĕрсен, вĕсем парттирен тухмалла пулсан, епĕ те вĕсене пĕр сăмахсăрах рекоментатси пама пултаратăп. Çапла пурăнас пулаҫ пĕр пĕринпе“. ÇЫРТАКАН ПĂРÇА.



# Кулак сăнĕ суйлав хыççăн.



— Ăх, шăр-шлă-семĭ.. Асăнтарăпĭ.. Пĕрерĕн пĕрерĕн суйлăпĭ..

Зам. Ответ. редактора П. Петров.

Чувашлит № 944. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга". Тир. 3800 экз.